25-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942
ОКТЯБРЬ
17
ШАМАТКУН
243 (6178) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАСАЧӖ

Тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене юсама халех тытӑнмалла

Ялхуçалӑхӗнчи ӗçсем вӗçленсе пынӑ май, тракторсене юсама тытӑнас вӑхӑт çитрӗ. Тракторсемпе ялхуçалӑхӗнчи ытти машинӑсене юсас ӗç вӑл килес çулхи çуракине хатӗрленес ӗçре чи паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать. Вӗсене кӗркуннепе хӗллехи уйӑхсенче лайӑх юсаса хуни 1943 çулта пысӑк тухӑçлӑ тырпул туса илес ыйтӑва чылай енчен татса парать.

Çавӑнпа та машинно-тракторнӑй станцисен, МТС политотделӗсен тракторсене кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра юсама тӗплӗн хатӗрленсе çитмелле, ремонт ӗçне халех йӗркеллӗн пуçарса ямалла. Çак ӗçе ниепле те кая хӑвармалла мар. Тракторсене юсама вӑхӑтра лайӑх хатӗрленмен пирки, ремонт ӗçне вӑхӑтра тытӑнманнипе пула иртнӗ кӗркуннепе хӗлле республикӑри хӑшпӗр машинно-тракторнӑй станцисем тракторсене юсас ӗçе вӑрӑма чӑсса пычӗç, ӗçӗн пахалӑхӗ те кирлӗ пек çирӗп пулмарӗ. Çавӑнпа та ӗнтӗ çураки вӑхӑтӗнчи хӗрӳ ӗç кунӗсенче хӑшпӗр тракторсемпе машинӑсем чарӑнса ларни те пулкаларӗ, çакӑ вӑл колхозсене те, государствӑна та пысӑк сиен кӳчӗ. Кӑçал та çавӑн пек ан пултӑр тесен, кашни МТС-ӑн, МТМ-ӑн тракторсене юсас ӗçе халех тытӑнмалла.

МТС руководителӗсен ӗçӗнче халь уйрӑмах çавӑрӑнӑçулӑх пысӑк пулмалла. Вӗсен тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене юсама хатӗрленсе çитсе, ремонт ӗçне халех тытӑнассине колхозсенче авӑн çапса пӗтерес, кӗрхи çӗртме тӑвас ӗçсемпе пӗрлех туса пымалла.

Республикӑри малта пыракан МТС-сем уйхир ӗçӗсене ӑнӑçлӑн пурнӑçласа пырса, тракторсене тата ялхуçалӑхӗнчи ытти машинӑсене юсама тытӑнчӗç. Елчӗк машинно-тракторнӑй станцийӗ тракторсене юсама октябрӗн 1-мӗшӗнче тытӑннӑ. Ремонт тӑвакан рабочисем, трактористсем ӗç кунӗн кашни сехетне туллин усӑ курса паянхи куна 11 трактора çӑмӑл ремонт тунӑ. Вӗсене актсем тӑрӑх çирӗплетсе йышӑнмалла. МТС-ӑн 8 бригади тракторсене юсама тытӑннӑ. Вӗсем тракторсене юсанисӗр пуçне 15 плуг, 19 сеялка, 17 культиватор юсаса лартнӑ.

Ишлей МТС-ӗ те тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене юсама октябрӗн 1-мӗшӗнче тытӑннӑ. МТС-ӑн механически цехӗнче кулленех хӗрӳ ӗç пырать. Машинӑсен чаçӗсене юсаççӗ, çӗнӗрен тӑваççӗ. Иртнӗ çулта токарнӑй станоксемпе машина пайӗсене касса тунӑ çеç пулсан, кӑçал çав станоксемпех машина пайӗсене якатса çутатассине те ӑнӑçлӑн туса пыраççӗ.

МТС хӗле кӗме лайӑх хатӗрленнӗ. Мастерскойсемпе гаражсене ӑшӑтнӑ, станоксене пурне те лайӑх юсанӑ. Паянхи куна пурӗ 5 трактора юсаса актпа йышӑнма хатӗрлесе лартнӑ. Коммунист Елахов ертсе пыракан трактор бригади ялхуçалӑх машинисене пурне те юсаса лартнӑ, икӗ трактор юсанӑ.

МТС мастерскойӗсене, ремонт тӑвакан рабочисем пурӑнмалли çуртсене хӗле хатӗрлесе çитересси—МТС директорӗсемпе политотдел начальникӗсен паян татса памалли ӗçӗ пулса тӑрать. Çуртсен тӑррисене, урайӗсене, кӑмакисене юсамалла, хӗле валли вутӑ çителӗклӗ таран хатӗрлемелле, пӗр сӑмахпа каласан, ремонт тӑвакан рабочисене ӗçлеме, пурӑнма лайӑх услови туса памалла. Ӗçе кирлӗ станоксене юсаса майлаштарса лартмалла, кирлӗ инструментсемпе приспособленисене хатӗрлесе çитермелле.

Анчах та хӗле хатӗрленес ӗç чылай МТС-сенче халӗ çителӗксӗр пулса пырать-ха. Уйрӑмах вутӑ, кӑмрӑк хатӗрлес тӗлӗшпе МТС-сем питех те начар ӗçлеççӗ. Республикӑри машинно-тракторнӑй станцисен кӑçал 8.850 кубометр вутӑ хатӗрлемелле, паянхи куна пурӗ те 1.510 кубометр çеç турттарса хатӗрленӗ. Кӑмрӑк хатӗрлес ӗç те юлса пырать. Çавӑн пекех двигательсемпе станоксене те юсаса çитермен-ха. 33 нефтедвигательрен паянхи куна 23-шӗ çеç юсавлӑ, 44 станокран 31-шӗ çеç ӗçлеме юрӑхлӑ.

Красноармейски МТС-ӗ тракторсене юсама хатӗрленес ӗç çине ку таранах çитсе те тивӗçлипе çавӑрӑнса пӑхман. МТС хӗллехи ӗçе пачах хатӗр мар. Мастерскойсене юсаман, ӑшӑтман, двигательпе станоксене ремонтламан, вутӑ, кӑмрӑк турттарма пачах тытӑнман. Ку тӗлӗшпе Шӑмӑршӑ, Сӗнтӗрвӑрри, Куславкка районӗсенчи машинно-тракторнӑй станцисем те нимӗн те туман-ха. Хӗле хатӗрленес тӗлӗшпе çакӑн пек кая юлса пынине халех пӗтермелле.

Тракторсен, ялхуçалӑхӗнчи ытти машинӑсен запаслӑ пайӗсене вырӑнтах тӑвас ӗç кӑçал уйрӑмах паллӑ вырӑн йышӑнмалла. Халӗ, вӑрçӑ условийӗсенче, промышленность предприятийӗсем фронт ыйтнине, çӗршывӑн оборони ыйтнине тивӗçтереççӗ. Çакӑ вӑл ялхуçалӑхне машина чаçӗсем парса тӑрас ӗçе йывӑрлатать. Пирӗн МТС-сен кӑçал тракторсене вырӑнтах тӳрлетсе çӗнетнӗ, çӗнӗрен тунӑ пайсемпе юсамалла пулать. Ку тӗлӗшпе трактористсемпе ремонт тӑвакан рабочисен пултарулӑхӗпе пуçарулӑхне хускатмалла, шалти ресурссемпе вӗçне çитиех усӑ курмалла пулать.

Елчӗк МТС-ӗнче ремонт тӑвакан рабочисем СХТЗ маркӑллӑ тракторсем валли гильзӑсене хӑйсемех тӑваççӗ, 3.100 номерлӗ детале те ӑнӑçлӑн хатӗрлеме тытӑннӑ, токарнӑй станоксем çумне питех те кирлӗ детальсене хӑйраса якатмалли хатӗрсем туса лартнӑ.

Запаслӑ пайсене туса хатӗрлес тӗлӗшпе МТС-сене промышленность предприятийӗсем пысӑк пулӑшу пама пултараççӗ. ЧАССР Наркомземӗн, районсенчи çӗрӗç пайӗсен ку тӗлӗшпе хӑйсем мӗн тума пултарнине халех пурнӑçа кӗртмелле. Машинӑсене юсама кирлӗ пайсене предприятисенче тума заказ памалла.

Тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене юсас ӗçе тӗпрен илсен кадрсем татса параççӗ. Чылай МТС-сенче ремонт тӑвакан рабочисем çителӗклӗ. Анчах республикипе илсен, тракторсене юсама халӗ пирӗн тимӗрçӗсем—4, токарьсем—16, слесарьсем—10 çитмеççӗ. Вӗсене çак кунсенчех тупса çитермелле.

Ишлей МТС-ӗнче ремонт тӑвакан опытлӑ рабочисем хӑйсен ӗçне çамрӑк рабочисене вӗрентсе пыраççӗ. Çак иртнӗ вӑхӑтра вӗсем 2 токарь, 2 слесарь вӗрентсе хатӗрлерӗç. Çакнах ытти МТС-сенчи рабочисем те ӑнӑçлӑн туса пыма пултараççӗ. Кашни МТС-рах тракторсемпе ытти машинӑсене юсама хатӗрленнипе, çӗнӗ кадрсем вӗрентсе пынипе пӗрлех ӗç вӑйне лайӑх вырнаçтарса тухмалла, тракторсене юсас ӗçре çирӗп йӗрке тумалла. Ӗç графикне пур енлӗн шутласа тумалла, ремонт ӗçӗн технологи процесне çӗнӗрен пӑхса тухмалла.

МТС трактористчӗсемпе трактористкисем, комбайнерсемпе комбайнеркӑсем тата ремонт ӗçӗнчи рабочисем Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва активлӑн хутшӑнчӗç. Ремонт ӗçӗнчи рабочисем аслӑ уява тракторсене юсас ӗçри çӗнӗ çитӗнӳсемпе кӗтсе илме хатӗрленеççӗ, хӗле тӗплӗн хатӗрленсе кӗрсе, çитес çулхи çураки валли кашни тракторпа машинӑна çирӗп юсаса лартма пулаççӗ. Трактористсемпе трактористкӑсем, комбайнерсемпе комбайнеркӑсем халӗ колхозсенче авӑн çапса пӗтерессишӗн, кӗрхи çӗртмене ытларах туса хӑварассишӗн хӑйсен пӗтӗм пултарулӑхӗпе ӗçлеççӗ.

Партипе совет органӗсен, МТС политотделӗсен, районсенчи çӗрӗç органӗсен задачи—МТС рабочийӗсен производствӑллӑ ӳсӗмне малалла çӗклесе пырасси, вӗсен пуçарулӑхне ялхуçалӑх ӗçӗсене вӗçленӗ çӗре, тракторсемпе ялхуçалӑх машинисене юсанӑ çӗре мобилизацилесси пулса тӑрать.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Октябрӗн 15-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Октябрӗн 15-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче тата **Моздок** районӗнче çапӑçнӑ.

Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑнусем те пулман.

* * *

Октябрӗн 14-мӗшӗнче пирӗн авиаци фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗçсен 5 танкне тата войскӑсем турттарса пыракан 40 автомашинине çити пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, артиллерин 5 батарейине пусарса лартнӑ, пӗр поезда çӗмӗрнӗ, противникӑн пехотине пӗр ротӑна çити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн войскӑсем хаяррӑн çапӑçнӑ. Противник икӗ пехотнӑй дивизи вӑйӗпе, 100 танк тата авиаци йышлӑн пулӑшса пынипе, рабочи поселока атакӑлама тытӑннӑ. Пирӗн боецсем гитлеровецсен атакисене хӑйсен пурнӑçне шеллемесӗр сирсе-сирсе яраççӗ. Уйрӑм участоксенче противник пысӑк çухатусем тӳссе пирӗн чаçсене кӑштах каялла чакарма пултарнӑ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, кункаçа нимӗçсен 45 танкне персе çӗмӗрнӗ е çунтарса янӑ тата противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 1.500 çынна ытла вӗлерсе пӗтернӗ.

Сталинградран кӑнтӑртарахра пирӗн пӗр чаçӑн боецӗсем çӗрлехи çапӑçура 300 гитлеровеца, 5 орудие, 6 дзота, унти гарнизонсемпе тата хӗçпӑшалпа пӗрлех, тата 2 япала складне пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Сталинградран çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре вырӑнти çапӑçусем пулса пынӑ. Н-ски гвардейски чаçӑн разведчикӗсем тӑшманӑн пехоти пӗр çӗре пухӑнса тӑнине курса, нимӗçсем атака тума хатӗрленнине пӗлнӗ. Пирӗн артиллеристсем темиçе хут харӑс пенӗ те противникӑн пӗрле пуçтарӑнса тӑнӑ ушкӑнне сапаласа янӑ. Тепӗр участокра пирӗн подразделенисем противника атакӑласа унӑн окопӗсен пӗрремӗш линине йышӑнса илнӗ. Нимӗçсен пехотине пӗр ротӑна çити вӗлерсе пӗтернӗ. Зенитнӑй артиллери тата çӗр çинчи войскӑсем противникӑн 3 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Моздок районӗнче пирӗн чаçсем противникӑн пирӗн оборона ӑшне савӑлланса кӗрсе кайнӑ танкӗсемпе пехотин групписене пӗтерессишӗн çапӑçнӑ. Пирӗн оборонӑна татасшӑн пулса, нимӗçсем пӗр кун хушшинче умлӑн-хыçлӑн виçӗ хут атака тунӑ. Пирӗн подразделенисем гитлеровецсен атакисене сирсе янӑ, нимӗçсене хӑйсен унччензхи позицийӗсем çине хӑваласа янӑ. Çак участокри çапӑçусенче нимӗçсен 19 танкне персе çӗмӗрнӗ е çунтарса янӑ тата противникӑн пехотине икӗ ротӑна çити пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра лейтенант Комлицкий командир пулса ертсе пыракан боецсем тӑшманӑн окопӗсене çӗмӗрсе кӗрсе кайнӑ та нимӗçсен темиçе вуншар салтакӗсене вӗлерсе пӗтернӗ. Çак тытӑçура сержант Абдула Кашапов штыкпа тата гранатӑсемпе нимӗçсен 9 салтакӗпе 3 офицерне вӗлернӗ.

* * *

Брянск фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн разведка отрячӗ çапӑçса разведка тунӑ. Противникӑн икӗ контратакине сирсе ярса, пирӗн боецсем нимӗçсен салтакӗсемпе офицерӗсене 300 çынна çити вӗлернӗ, пӗр тупӑ, 300 снаряд, темиçе пулемет, автоматсем, винтовкӑсем тата 5.000 патрон тытса илнӗ.

* * *

Минск облаçӗнче кӗрешекен партизансен ушкӑнӗ противникӑн поездне ӳпӗнтерсе янӑ. Пӗр паровоз, войскӑсем турттарса пыракан 22 вагон, автомашинӑсем тиенӗ 13 платформа тата горючи тултарнӑ 2 цистерна çӗмӗрӗлнӗ.

* * *

Нимӗçсен 593-мӗш пехотнӑй полкӗнчи противотанковӑй орудисен 14-мӗш ротине боеприпассем парса тӑракан обозӑн тыткӑна лекнӗ командирӗ унтер-офицер Гуго Гутман çапла каласа панӑ: «Пирӗн полк хӑйӗн йышне 60—70 процент çухатрӗ. Юлашки вӑхӑтра питӗ нумай офицер стройран тухрӗ. Пӗрремӗш батальонра пӗр кадровӑй офицер та чӗррӗн юлман. Пиллӗкмӗш ротӑран 3 офицера вӗлернӗ. Пӗрремӗш батальон командирне тата иккӗмӗш батальон командирне амантнӑ. Вӗсем иккӗшӗ те запасра тӑнӑ офицерсем. Питех те пысӑк çухатусем пулнипе çав икӗ батальона пӗрлештерсе пӗр батальон тунӑ. Çав çӗнӗ батальонӑн командирӗ Марбертта запасри офицер. Нумаях пулмасть вӑл вӑрçӑ çинчен питӗ кӗскен, анчах та çав тери уççӑн çапла каларӗ: «Эпӗ çак юрӑхсӑр япаларан хӑтӑлса киле таврӑнасшӑн. Эпир пурпӗрех вырӑссен иккӗмӗш хӗлне чӑтса ирттерес çук», — терӗ».

* * *

Нимӗçсем тытса илнӗ Дно хулинче пурӑнакан халӑха захватчиксем выçӑ вилӗмпе вилмелле туса хунӑ. Асап кӑтартассипе хӑратса, гитлеровецсем хӗрарӑмсене тата çул çитмен çамрӑк ачасене нимӗçсем валли талӑкра 18-шар сехет ӗçлеттереççӗ. Ирӗксӗр ӗçре тӑракансене апата кунне 200 грамм арпа параççӗ. Октябрь уйӑхӗн пуçламӑшӗнче нимӗçсем 18 хӗрарӑма персе пӑрахнӑ. Вӗсем выçӑпа ытла та начарланса çитнӗ пирки вырӑнтан та тапранма пултарайманнипе ӗçе тухман пулнӑ.

* * *

Польша хресченӗсем нимӗçсен захватчикӗсене тырӑ тата продовольстви пама килӗшмеççӗ. Çав май нумай районсенче хресченсемпе эсэсовецсем хушшинче тытӑçусем пулса иртеççӗ. Нумаях пулмасть Избицы çывӑхӗнче Польша патриочӗсем хресченсенчен туртса илнӗ тырра хунӑ 4 склада вут тӗртнӗ. Владиславов хулинчен инçе мар вырӑнта эсэсовецсен отрядӗнчен 19 салтак нимӗн хыпарсӑр çухалнӑ. Темиçе кун иртсен вӗсен виллисене çавӑнти вӑрманта тупнӑ.

Октябрӗн 16-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Октябрӗн 16-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче тата **Моздок** районӗнче çапӑçнӑ. Ытти фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Сталинград районӗнче çаплах хаяр çапӑçусем пынӑ. Н-ски чаçӑн боецӗсем тӑшманӑн пилӗк атакине сирсе янӑ, 6 танкне çунтарса янӑ тата нимӗçсен пехотине пӗр рота ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра пирӗн чаçсем противникӑн икӗ атакине сирсе янӑ. Çав çапӑçура нимӗçсен 30 танкне ытла персе çӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Вӑйлӑн çапӑçнӑ хыççӑн пирӗн чаçсем противникӑн пехотипе танкӗсен йышлӑрах вӑйӗсем хӗснипе рабочи поселокӑн темиçе урамне хӑварнӑ.

Совет летчикӗсем сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери пенипе нимӗçсен 16 самолетне ӳкернӗ.

* * *

Сталинградран çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре пирӗн чаçсем вырӑнти çапӑçусем туса пынӑ. Пӗр участокра Н-ски чаçӑн боецӗсем противника атакӑласа кӑштах малалла куçнӑ та мелллӗрех позицие йышӑнса илнӗ. Хӑйсен çухатнӑ рубежне каялла тытса илес тесе, гитлеровецсем икӗ хутчен контратака тунӑ, анчах та вӗсен контратакине сирсе янӑ. Çапӑçу хирӗнче нимӗçсен салтакӗсемпе офицерӗсен 100 вилли ытла выртса юлнӑ. Ытти фронтсенче икӗ енчен те артиллери персе тӑнӑ тата разведчиксем шыраса çӳренӗ.

* * *

Моздок районӗнче пирӗн танкистсем противникӑн атакине сирсе янӑ, нимӗçсен 4 танкне, 8 автомашинине, 4 орудине пӗтерсе тӑкнӑ тата 250 гитлеровеца çити вӗлернӗ. Тепӗр участокра нимӗç пехотин батальонӗ 8 танк пулӑшса пынипе пӗр высотана тытса илме хӑтланнӑ. Çав высоташӑн пынӑ çапӑçура пӗр ӑнӑçусӑрах пӗр ротӑна çити салтака пӗтерсе хурса, нимӗçсем хӑйсен малтанхи позицийӗсем патне чакнӑ.

* * *

Çурçӗр-Хӗвеланӑç фрончӗн участокӗсенчен пӗринче Петровский юлташ ертсе пыракан гвардейски миномет батарейи нимӗçсен горючи хунӑ складне вут тивертсе çунтарнӑ тата темиçе вуншар гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Украинӑри партизансен отрячӗ октябрь уйӑхӗн пуçламӗшӗнче нимӗçсен виçӗ поездне ӳпӗнтерсе янӑ. 3 паровоз тата 68 вагон çӗмӗрӗлнӗ. Противникӑн чӗрӗ вӑйӗпе техники нумай пӗтнӗ.

* * *

Нимӗçсен 371-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 670-мӗш полкран тыткӑна лекнӗ салтаксем Михель Гензель тата Вильгельм Так çапла каласа панӑ: «Фронталла кайнӑ чухне салтаксем хӑйсене хӑйсем çирӗп те хавас тытрӗç. Нумайӗшӗ вырӑссем ӗнтӗ ӗлӗкхи пек вӑйлӑн хирӗç тӑраймаççӗ тесе шутлатчӗç. Анчах та эпир Сталинград патне çитсессӗн, малтанхи кунах дивизин командирне вӗлерчӗç. 5-мӗш ротӑра наступлени тума тытӑннӑ хыççӑн пӗр сехет хушшинче 30 çын, 6-мӗш ротӑра—40 çын вилнӗ е аманнӑ. 8-мӗш ротӑра тата нумайрах

Вӗçӗ 2-мӗш страницӑра.

Чӑваш халӑхӗн мухтавлӑ ывӑлне телефонист-ефрейтор Иван Банбурин юлташа

Нимӗçсен фашистла вӑрӑ-хурахӗсене хирӗç хаяррӑн çапӑçса эсир 1942 çулти сентябрӗн 30-мӗшӗнче тунӑ геройлӑ ӗç шӑн Сире хӗруллӗн саламлатпӑр. Çав çапӑçура Эсир хӑвӑр кӑна гитлеровецсен 20 салтакне тата пӗр офицерне вӗлернӗ, тӑшман артиллерипе минометсенчен вӑйлӑн персе тӑнине пӑхмасӑрах, километр çурӑ тӑршшӗнчи телефон çыхӑнӑвӗ 7 тӗлте таталнине 20 минута хушшинче сыпса тӳрлетнӗ.

Отечественнӑй вӑрçӑ фронтӗнче хӑюллӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑ хамӑр земляшӑн пӗтӗм чун-чӗререн савӑнатпӑр. Хамӑр тӑван çӗршывӑн ылханлӑ тӑшманне хирӗç пыракан кӗрешӳре малашне çӗнӗ çитӗнӳсем тума ырӑ сунатпӑр.

**ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ПРЕЗИДИУМӖ,
ЧӐВАШ АССР ХАЛӐХ КОМИССАРӖСЕН СОВЕЧӖ,
ВКП(б) ЧӐВАШ ОБКОМӖ.**

Иван Банбурин ефрейторӑн паттӑрла ӗçӗ

Кӑçалхи сентябрӗн 30-мӗшӗнче пулса иртнӗ çапӑçура фашистсен СС «Великая Германия» дивизийӗнчи пуçкасакансен батальонӗ, танксем пулӑшса пынипе, пирӗн часть вырнаçса тӑнӑ çӗре çӗмӗрсе кӗнӗ. Пирӗн боецсемпе командирсем, пурте пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ пулса, тӑшмана хирӗç çапӑçӑва тухнӑ. Вӗсен хушшинче пирӗн земляк, комсомолец-телефонист Банбурин та пулнӑ.

Тӑван çӗршыв «Пӗр утӑм та каялла чакмалла мар!» тесе панӑ приказа тӳррӗн пурнӑçа кӗртсе пырса, ефрейтор Иван Банбурин, окопа лайӑх пытанса выртнӑскер, хӑйӗн винтовкинчен тӑшмана пӗрин хыççӑн теприне пере-пере ӳкерме тытӑннӑ. Нимӗçсем ӑна асӑрханӑ та, чӗррӗн тыткӑна илес шутпа, аякран кайса çавӑрса илме шутланӑ. Герой вӗсене çаплах пере-пере ӳкернӗ.

Акӑ патронсем те пӗтсе çитеççӗ. Фашистсен обер-лейтенанчӗ, Банбуринӑн пемелли пӗтнине курса, пӗтӗм пӗвӗпе ура çине тӑрса, «Русс, парӑн!» тесе кӑшкӑрса ун патнелле утма тытӑннӑ.

— Çук, чӗрӗллех илеймӗн,—тесе ответленӗ хӑюллӑ телефонист. Унтан фашистпа кӗрешме ура çине тӑнӑ. Вӑл гитлерла бандита штыкпа чиксе пӑрахнӑ.

Пирӗн боецсем аркатмаллах пырса çапнипе, фашистла захватчиксем паникӑна ӳксе каялла тарма тытӑннӑ. Вӗсем пӑрахса хӑварнӑ ручной пулемета ярса тытса, хастар ефрейтор, кӗçӗн сержантпа Музаев юлташпа пӗрле, таракан нимӗçсене çурӑмран пере-пере пӑрахнӑ. Çакӑнта татах темиçе вуншар нимӗç хӑйсен вилӗмне тупнӑ.

Çав хаяр çапӑçура Банбурин юлташ хӑй кӑна винтовкӑран персе тата штыкпа чиксе гитлеровецсен 20 салтакне тата пӗр офицерне вӗлернӗ.

Çапӑçура пирӗн çыхӑну таталнӑ пулнӑ. Хӑйӗн пурнӑçне хӗрхенмесӗр, тӑшман минометсенчен тата артиллерирен тӑвӑллӑн персе тӑнине пӑхмасӑр, Банбурин юлташ километр тӑршшӗнчи çыхӑну линине 20 минута хушшинче 7 тӗлте сыпнӑ.

Банбурин юлташ тӑракан чаçӑн политотделӗ, комсомолец-телефонистӑн паттӑрла ӗçне чысласа, ятарласах листовка кӑларнӑ. Листовкӑра çапла каланӑ: «Чӑваш халӑхӗн геройне чыс та мухтав». «Унӑн хастарлӑхӗпе тата паттӑрлӑхӗпе пирӗн чаçри мӗнпур боецсемпе командирсем тата политработниксем мухтанаççӗ, — тенӗ листовкӑра. — Унӑн геройла ӗçӗ кашни совет воинӗшӗн пример пулса тӑмалла. Боец юлташсем! Фашистла мерзавецсене Иван Банбурин пекех паттӑррӑн та пӗлсе пӗтере-пӗтере тӑкӑр».

Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑрту

Цехсен иртнӗ вунӑкунлӑхри ӗçӗсем

КАНАШ, октябрӗн 16-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Вагонсем юсакан заводри цехсем хушшинче уяв умӗнхи ӑмӑрту вӑйланнӑçемӗн вӑйланса пырать, кашни цех коллективӗ Октябрьти революци 25 çул тултарнине ӗçри çӗнӗ çитӗнӳпе паллӑ тӑвассишӗн кӗрешет. Хӗрӳ ӑмӑртура чылай цехсем сентябрь уйӑхӗн малтанхи вунӑкунлӑхӗнчи заданисене ирттерсе тултарчӗç. Пывӑçсем каскалакан цех вунӑкунлӑхри задание 130 процент, Токарев юлташ ертсе пыракан цех 111 процент, Соколовский юлташ ертсе пыракан цех 105,8 процент тултарчӗç. Ковальчук, Назаров юлташсен цехӗсем те иртнӗ вунӑкунлӑхра ӑнӑçлӑн ӗçлерӗç.

Пуринчен те пысӑк ӗç тухӑçлӑхне фронтовой бригадӑсемпе опытлӑ стахановецсем кӑтартаççӗ. ВКП(б) кандидачӗ Высотский юлташ ертсе пыракан бригада кулленхи нормӑна 330 процент, комсомолецсемпе çамрӑксен Хӗрлӗ ялавӑ бригади (бригадирӗ Чесов юлташ) 350 процент таран тултарать. Механически цехри Кошеевпа Пименов токарьсем, Павловӑпа Семенова сверловщицӑсем пӗрмаях 2—3 норма тултарса ӗçлеççӗ. Утильцехри токарь Глыпчак юлташ вара 4 нормӑна та çитерет

Г. СОРОКИН,
Заводри партбюро секретарӗ.

Квартал планне ытлашшипех тултарнӑ

ÇӖМӖРЛЕ. **(Хамӑр корр.).** Мехлесопунктра ӗçлекенсем отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ кунӗсенче çӗршыва ытларах та ытларах вӑрман хатӗрлесе пама тӑрӑшаççӗ. Ку тӗлӗшпе вӗсем уйрӑмах виççӗмӗш кварталта çине тӑрса ӗçлерӗç. Коллектив квартал планне вутӑ хатӗрлес енӗпе те, турттарас тӗлӗшпе те икӗ хут ытла ирттерсе тултарнӑ.

Коллектив чугунçул транспорчӗ валли вутӑ хатӗрлес ӗçе те чыслӑн туса пырать. Иртнӗ кварталта акӑ, 21 пин кубометр касса хатӗрлесе 15 пин кубометр турттармалла пулнӑ пулсан, вӑл 22.720 кубометр хатӗрлесе 20.963 кубометр турттарнӑ.

Вӑрман хатӗрлевӗнче стахановецсем те сахал мар. Вӗсем кулленех ӗçре пример кӑтартаççӗ. Паллӑ лесорубсем — Федор Швецов, Александра Булыгина, Дария Романова юлташсем нормӑсене куллен 130—150 процент тултараççӗ. Василий Анюшин, Николай Саушин, Сергей Мажуков юлташсем — 120—130 процент тултарса ӗçлеççӗ. Турттаракансенчен уйрӑмах И. Арланов, Григорий Саушин, Григорий Горбунов, Матвей Нигорелов, Устиния Михайлова юлташсем малта пыраççӗ. Вӗсем сентябрь уйӑхӗнче нормӑна 180—200 процент тултарса ӗçленӗ. Октябрь уйӑхӗнче вӗсен ӗç тухӑçлӑхӗ татах та ӳсрӗ.

Х. ЛИСИН.

Финанс работникӗсен ӑмӑртӑвӗ

ЧКАЛОВСКОЕ, октябрӗн 16-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Республикӑри малта пыракан финанс работникӗсем Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнма чӗнсе каланине ответлесе, пирӗн районри финанс работникӗсем хӑйсем çине çӗнӗ обязательствӑсем илнӗччӗ. Вӗсем уяв тӗлне кӑçалхи ялхуçалӑх налогне, окладнӑй страховани пӗтӗмпех пухса çитерме, иртнӗ çулти парӑмсене тӳлесе татма, тӑваттӑмӗш квартал планне ирӗклӗ страховани тата ирӗклӗ тӳлевсем енӗпе 50 процента яхӑн тултарма пулнӑччӗ. Çак обязательствӑсене пурнӑçа кӗртессишӗн кӗрешсе, районри финанс работникӗсем хӑйсен ӗçне чылай лайӑхлатрӗç. Виççӗмӗш квартӑлта укçа-тенкӗ пухмалли плана район — 114,4 процент, государство дохочӗсем енӗпе—176 процент тултарчӗ.

Укçа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе уйрӑмах Тутар Тимеш ялсовечӗ (налог агенчӗ Плаксина юлташ) кӑтартуллӑн ӗçлерӗ. Ку ялсовет иртнӗ кварталти плана 264 процент тултарчӗ. Плана çавӑн пекех Иккӗмӗш Чкаловски ялсовечӗ (налог агенчӗ Атаказов юлташ) 222,5 процент, Кзыл Чишме ялсовечӗ (налог агенчӗ медаленосец Велиуллин юлташ) 200 процент тултарчӗç.

Тутар Тимешпе Кзыл Чишме ялсовечӗсенчи налог агенчӗсем 1942 çулти ялхуçалӑх налогне тата окладнӑй страхование пӗтӗмпе тенӗ пекех пухса çитерчӗç. Финанс ӗçӗнче çакӑн пек çитӗнӳ тума вӗсене ялсовечӗсем, колхозсем, комсомол организацийӗсем тата ялти актив вӑйлӑн пулӑшрӗç. Виççӗмӗш участокри налог инспекторӗ Л. Кириллова юлташ укçа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗçлет, хӑйӗн çумне çирӗплетнӗ ялсовечӗсенчи налог агенчӗсене вӑл пӗрмаях пулӑшса тӑрать. Çавна май, унӑн участокӗ виççӗмӗш кварталти плана 125,9 процент тултарчӗ. Ку участокри 6 ялсовечӗ пурте укçа-тенкӗ ӗçӗнче малта пыраççӗ.

Анчах районра финанс ӗçӗнче юлса пыракан ялсовечӗсем те пур-ха. Пурӗ 6 ялсовечӗ, вӑл шутра Тутар Сӑкӑт, Чӑваш Сӑкӑт, Тӑрӑн тата ытти ялсовечӗсем, иртнӗ кварталти финанс планне тултараймарӗç.

З. ИГНАТЬЕВ.
Чкаловски райфо заведующийӗ.

ВЦСПС-ра

Профессиллӗ Союзсен Пӗтӗм Союзри Центральный Совечӗ халӑх хуçалӑхӗн пӗр отраслин заказӗсене пурнӑçлакан заводсен Пӗтӗм Союзри Социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1942 çулти сентябрь уйӑхӗнчи итогӗсене тунӑ.

Халӑх хуçалӑхӗн пӗр отраслин заказӗсене пурнӑçлас тӗлӗшпе сентябрь уйӑхӗнче лайӑх ӗçленӗ тесе палӑртнӑ смежник—заводсен хисепӗнче пирӗн республикӑри Н-ски завод (директор заместителӗ Бунин юлташ) пур.

Вӗренекенсен лайӑх ӗçӗ

ÇӖМӖРЛЕ. **(«Чӑваш Коммуни» корр.).** Тӑван Хӗрлӗ Çар воинӗсем валли ӑшӑ тумтирсем пухас ӗçе шкул ачисем те активлӑн хутшӑнаççӗ. Вӗсен вӑйӗпе юлашки вӑхӑтра вуншар килограмм çӑм, вуншар мӑшӑр алшиш-носкисем, мулаххайсем тата ытти ӑшӑ тумтирсем пухнӑ.

Мыслец разъездӗнчи пуçламӑш шкулта вӗренекенсем хӑйсем хушшинче 596 тенкӗ укçа пуçтарчӗç. Унпа вӗсем япаласем илсе фронтовиксем патне парнесем яраççӗ. Кунсӑр пуçне тата фронтовиксем валли 5 тир, 2 çӗлӗк, алшишсем, чӑлхасем пухнӑ.

Çак кунсенче хулари 1-мӗшпе 2-мӗш шкулсенче вӗренекен пионерсем питех те лайӑх ӗç туса ирттерчӗç. Вӗсем Хӗрлӗ Çар боецӗсем валли ӑшӑ тумтирсем пухас тӗлӗшпе ӗçлекен районри комиссин складӗнче сапаланса выртакан юрӑхсӑр çӑма темиçе кун хушши пӗрчӗн-пӗрчӗн суйласа, 22 килограмм юрӑхлӑ çӑм тунӑ. Ку ӗнтӗ сахалтан та 6—7 мӑшӑр çӑматӑ йӑвалама çитет.

Хулари шкулта вӗренекенсем тӑван боецсем патне Октябрьти аслӑ революци 25 çул тултарнӑ ятпа хаклӑ парнесем яма хатӗрлеççӗ. Ку тӗлӗшпе уйрӑмах 1-мӗш шкулти аслӑ пионер вожатӑйӗ Маркелова юлташ тӑрӑшса ӗçлет. Вӑл ертсе пынипе шкулта парнесем илме укçа пухаççӗ, табак хутаççисем çӗлеççӗ, сӑмса тутӑрӗсем, ӑшӑ алшиш-носкисем пухаççӗ.

Колхозсем хӗрлӗ обозсем организацилеççӗ

ВӐРМАР, октябрӗн 14-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Государствӑна пахча-çимӗç, çӗрулми парас ӗç колхозсенче пысӑк çӗкленӳпе пулса пырать. Паян Кивӗ Вӑрмарти «Большевик» колхоз хатӗрлев пунктне 45 лавпа 130 центнер пахча çимӗç леççе пачӗ. Çавӑн пекех Тикешри «Большевик», Шептахри «Хӗрлӗ Шептах», «Свобода», Молотов ячӗпе тӑракан колхозсем те нумай лавлӑ хӗрлӗ обозсем организацилесе государствӑна пахча-çимӗç, çӗрулми леççе пачӗç. Районри колхозсем паян хатӗрлев пунктне пурӗ 387 центнер ытла пахча-çимӗçпе çӗрулми леççе панӑ.

А. СМИРНОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 16-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

...çын стройран тухнă. Çухатусем пысăк пулнă пирки салтаксем нумайĕшĕ салхуллă, пĕр чĕнмесĕр çÿреççĕ. Нумаях пулмасть пĕр салтак пире хăйĕн Штаргардран пĕр Готвальд ятлă çын янă çырăва вуласа пачĕ. Готвальд çапла çырать: совет самолечĕсем Штаргард çине бомбăсем пăрахрĕç те ăна вăйлăн çĕмĕрчĕç, тет».

* * *

Нимĕçсен 288-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 245-мĕш полкăн 13-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Иозеф Эртельтальнер çапла каласа панă: «Киевра эпĕ нимĕç офицерĕсемпе салтакĕсем мирлĕ çынсене тата тыткăна лекнĕ вырăс çыннисене асаплантарнине тата вĕлернине куртăм. Хула хĕрринче çар казармисенчен инçех мар вырăнта фабрикăн çурри ишĕлнĕ çурчĕ ларатчĕ. Офицерсем хушнипе салтаксем унта темиçе çĕр вырăса хăваласа кĕртрĕç. Унта çав вырăссене темиçе кун апатсăр, шывсăр усрарĕç. Тытса хупнă çынсене выртма ирĕк памарĕç. Асапланса пĕтнĕ тата выçă çынсем ура çинчех çывăрса пурăнчĕç. Тăваттăмĕш е пиллĕкмĕш кунне çав çынсене пĕрерĕн картишне тухма хушрĕç. Тухакан вырăссене вара пĕрин хыççăн тепĕрне персе вĕлерсе пычĕç».

* * *

Лейпциг хули çывăхĕнчи (Германия) çар заводĕнче ют çĕршывсенчен килнĕ рабочисем ĕç укçинчен питĕ нумай тытса юлассине пăрахăçлама тата апата лайăхлатма ыйтнă. Администраци çав требованисене пурнăçа кĕртме килĕшмен хыççăн вăл заводра забастовка пуçланса кайнă. Рабочисем трансформатор подстанцине стройран кăларнă. Завод вара темиçе кун ĕçлемен.

Партин колхозсенчи организацисен задачисем

Пĕтĕм Совет халăхĕ хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн хаяррăн çапăçнă вăхăтра парти организацисен масса хушшинчи ролĕ пысăкланчĕ. Фронт ыйтнă пек ĕçлесси — парти организацисен, предприятисемпе колхозсен тата учрежденисен тĕп задачи.

Çакна Пĕчĕк Маклашкинăри «Красная Армия» колхозри коммунистсем лайăх ăнланса ĕçлеççĕ. Колхоз пур йышши тырăсене те, пахча-çимĕçсене те Сĕнтĕрвăрри районĕнче чи малтан пухса кĕртрĕ. Колхоз председателĕ, вăлах парти кандидачĕсен группин руководителĕ Е. Анкудинов юлташ ялхуçалăхĕнчи пур тĕрлĕ ĕçсене те вăхăтра лайăх йĕркелесе пынине пула, колхоз сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерчĕ, сентябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне государство умĕнчи обязательствăсене пĕтĕмĕшпех парса татрĕ. Анкудинов юлташ тата шкул директорĕ коммунист Железкова юлташ тăккаланчăксемпе кĕрешме колхозниксемпе шкулта вĕренекен ачасене вăхăтра мобилизацилерĕç, пур çĕрте те пучахсене пĕтĕмĕшпех пуçтарнă.

Парти членĕсен кандидачĕсен группи кунта комсомол организаципе çирĕп çыхăнса тăрать, комсомолецсемпе çамрăксене ĕçре лайăх ертсе пырать. Комсомол организацин секретарĕ Федорова юлташ колхозра звеньевой пулса ĕçлет. Вăл ертсе пыракан звено ĕçре чи малти вырăна тухрĕ. Хĕрлĕ Çар ретне кайнă бригадира ĕçре комсомолка Мария Панина улăштарчĕ. Ĕç пахалăхĕшĕн кĕрешсе ĕçлени кунта хăйĕн лайăх результачĕсене пачĕ. Колхоз пысăк тухăçлă тырпул пухса кĕртрĕ: вăтам шутпа кашни гектартан 16,82 центнер тулă, 198 центнер çĕрулми, 50 центнер клевер ути тата ыттисем те пухса илнĕ.

«Красная Армия» колхоз — районри ялхуçалăх выставкин кандидачĕ. Колхозниксем фронта пулăшас ĕçе те манмаççĕ. Оборона фондне хывма пĕр гектар çинчен пухнă тулла пĕтĕмпех панă. Октябрь уявĕ ячĕпе колхоз тата колхозниксем хăйсен хуçалăхĕсенчен фронтри боецсемпе командирсем патне 47 килограмм аш-какай, 40 килограмм тулă çăнăхĕ, 55 çăмарта, 365 килограмм çĕрулми, 10 килограмм пыл, 5,5 килограмм çу тата ытти çимĕçсем ярса панă.

Парти членĕн кандидатне нумаях пулмасть илнĕ Ксенофонтов юлташ та Урицкий ячĕпе тăракан колхозăн ĕçне фронт ыйтнă пек организацилесе пырать. Колхоз тырпулсене вăхăтра пуçтарса кĕчĕ, государство умĕнчи обязательствăсене парса татрĕ.

Партин колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсен пĕтĕм ĕçне ялхуçалăхĕнчи ĕçсемпе таччăн çыхăнтарса пырас задачăна районри пур коммунистсем те лайăх туса пымаççĕ-ха. Хуçалăхри пĕтĕм ĕçсене парти организацин организациллĕ ĕçĕпе çыхăнтарса пымалла: организацин пухăвĕсене тĕп ыйтусемпе çыхăнтарса вăхăтра туса ирттермелле, комсомол организацийĕн ĕçне куллен ертсе пымалла, парти организацийĕн йышне хăйсен пултарулăхне ĕçре кăтартса паракан патриотсемпе ÿстермелле.

Партиллĕ ĕçе хулари потребитель обществинчи, уполнаркомзагри пуçламĕш организацисем начар туса пыраççĕ. Кунта коммунистсен пухăвĕсене вăхăтра пухса ирттермеççĕ, организацисен йышĕ ÿссе пымасть. Партин районри уйрăм организацийĕсен секретарĕсем парти ретне çĕнĕ çынсем илес ĕçе юлашки вăхăтра начарлатрĕç. Районра партин пуçламĕш организацийĕсем 21 пулсан, вĕсенчен июльпе сентябрь уйăхĕсенче 5 организаци çеç хăйсен ретне çĕнĕ членсем илнĕ. Парти ретне çĕнĕ членсем илес ĕç Ивановари кирпĕч заводĕнчи, спирт тăвакан заводри тата ытти хăшпĕр организацисенче пачах çителĕксĕр пулса пырать. Ку организацисенчи коммунистсем парти ретне малта пыракан рабочисемпе служащисене илес ĕç çинç хăйсен чи малтанхи обязанноçĕ çине пăхнă пек пăхмаççĕ. 1942 çулăн виççĕмĕш кварталĕнчи уйăхсенче пĕр комсомолеца çеç парти ретне илнĕ. Çывăх вăхăтрах партин районри организацийĕн, колхозсенчи пуçламĕш организацисен секретарĕсен çак çитменлĕхе пĕтермелле, колхозниксем, çамрăксем хушшинче партиллĕ ĕçе вăйлатмалла.

М. ЧУМАКОВА,
ВКП(б) Сĕнтĕрвăрри райкомĕн оргинструкторски отделĕн заведующийĕ.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç япăх пырать

ИЕПРЕÇ. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕ кĕрхи çĕртме туса хăварас ĕçри мероприятисем çинчен йышăннă постановление районри чылай колхозсем çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çавна пула та ĕнтĕ район кĕрхи çĕртме тумалли плана 20 процента яхăн çеç пурнăçланă.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç юлса пынин тĕп сăлтавĕ — колхозсенче туртăм вăйне çак ĕçе кирлĕ пек явăçтарманнинче тата çĕртме сухи тунă çĕрте ĕçлеме уйăрнă лашасемпе туллин усă курманнинче пулса тăрать. Хăшпĕр колхоз правленийĕсем, МТС тракторĕсем пырасса кĕтсе, колхозри лашасене кĕрхи çĕртме тунă çĕре кÿлмесĕр тăраççĕ.

«Чувашия» колхоз сентябрĕн 25-мĕшĕ хыççăн пĕр гектар та сухаламан. Ку колхозăн план тăрăх кĕрхи çĕртме 402,9 гектар туса хăвармалла, паянхи куна 4 гектар кăна сухаланă. Çавăн майлах «10 лет Октября» колхозра та кĕрхи çĕртмене 7,5 гектар кăна сухаланă. Сентябрĕн 25-мĕшĕ хыççăн (10 кун хушшинче) пĕтĕмпе те 1,36 гектар кăна сухаланă.

Юлашки вăхăтра чылай колхозсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе вăйлатса пырас вырăнне, вăл ĕçе вăйсăрлатрĕç. Октябрĕн 1-мĕшĕпе 5-мĕшĕ хушшинче районри 48 колхозран 22 колхозра пĕр гектар та çĕртме туман. Çакă вăл колхоз председателĕсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе хак паманнине, вăл ĕç çине ответсăррăн пăхнине кăтартса парать. «Молния» колхоз председателĕ Николаев, «Правда» колхоз председателĕ Карпов, «Комбайн» колхоз председателĕ Никитин, «17-ый партсъезд» колхоз председателĕ Пудовкин юлташсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕç начар пулса пынин сăлтавне лашасем çитменни çине йăвантарма пăхаççĕ. Çав вăхăтрах вăл колхозсенче çĕртме сухи тунă çĕрте ĕçлеттерме лашасем çителĕклех тупма пулать. Кунта ĕçе организацилеме пĕлни çеç кирлĕ.

«17-й партсъезд» колхозра лашасемпе колхоз тулашĕнче ытларах ĕçлеççĕ. Çавăн пек, çак иртнĕ кунсенче ку колхозран 3—4 лашапа Шупашкара эрех тиеме кайнă та çĕртме сухинче пĕр лаша та ĕçлемен. Çавăн пек ĕçленине пула ĕнтĕ колхоз 69,5 гектар кĕрхи çĕртме тăвас вырăнне 4 гектар кăна тунă.

«Тымар», «Социализм», Буденный ячĕпе тăракан, «Смычка» тата ытти колхозсем те кĕрхи çĕртме тума пуçăнманнине райçĕрĕç пайĕнчи руководительсем лайăх пĕлеççĕ, анчах нимĕнле мера та йышăнмаççĕ.

Кĕрхи çĕртме — вăйлă тырпул никĕсĕ пулса тăрать. Çавна шута илсе, малта пыракан колхозсем çĕртме сухине вăхăтра туса хăварма тăрăшаççĕ. Ку енĕпе «Трактор на холме» колхозра ĕçе большевикла организациленĕ. Колхозри лашасене çак ĕçе анлăн явăçтарса, колхоз кĕрхи çĕртмене туса пĕтерчĕ. Колхозра 2-мĕш бригадăри (бригадирĕ З. Тимофеев) колхозниксем М. Прокопьева, Н. Пирогов, Ф. Григорьев (вĕсем пурте 15—20 çулхи çамрăксем) кунне 3,75 гектар сухалас вырăнне, 5—6 гектар сухаласа пынă.

Димитров ячĕпе тăракан колхозра та юлашки вăхăтра çĕртме тăвас ĕçе темиçе хут вăйлатрĕç. Октябрĕн 1-мĕшĕнчен 20 гектар кăна сухаланă пулсан, çак иртнĕ 5 кун хушшинче 50 гектар сухаланă.

Д. МИХАЙЛОВ.

Ют çĕршывсенче

Гитлерла захватчиксем оккупациленĕ совет районĕсенче тăвакан усал ĕçсем

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла хаçатсен оккупациленĕ совет районĕсенчи пурнăç çинчен çырнă статьисенче совет халăхĕ оккупантсен пусмăрĕ айĕнче питĕ начар пурăнни çинчен çырнисем тата нимĕçсен фашистла захватчикĕсем совет халăхне калама çук хытă мăшкăллани, çаратни тата вĕсем тĕлĕшпе ирсĕр хăтланни çинчен çырнисем те чылай тĕл пулаççĕ.

Халăха вĕçĕ-хĕррисĕр çаратаççĕ. Хресченсенчен тата хулари çынсенчен юлашки татăк çăкăра туртса илеççĕ. «Дейче цейтунг ин остланд» хаçатра, акă, Ригăра гитлерла «генеральнăй комиссарăн» Литманăн заявленине пичетленĕ, çав заявленире çапла каланă: «Латыш хресченĕсен пурин те пĕтĕм ыраша, тулла, хуратула тата урпана леçсе памалла. Ырашăн виçĕ пайĕнчен икĕ пайне 1942 çулхи декабрьтен кая юлмасăр памалла, ытти пайне — 1943 çулхи январь уйăхĕнче памалла», тенĕ. «Ревалер цейтунг» хаçат пĕр статьяра тÿрех çапла калать: «Эстони хресченĕсемпе рабочисен Германи çарĕшĕн вăрçă йывăрлăхĕсен чи пысăк пайне тÿссе ирттермелле», тет.

Минскри питĕ пысăк чухăнлăх çинчен «Минскер цейтунг» хаçат çырать. Çав хаçат каланă тăрăх, Минскра халăхăн хисепĕ виçĕ хут чакнă. 100 пин совет гражданĕ вăрçăччен 5 пин çын пурăннă çуртсенче хĕсĕнсе пурăнаççĕ. Минскра сыхланса юлнă çуртсене пурне те нимĕçсем йышăннă. Çуртсенче ытла та тăвăр пулнă пирки тата выçлăх пирки Минскра, çав хаçат каланă тăрăх, чирсем питĕ хăрушшăн сарăлса кайнă. Тифпа, дифтеритпа чирлекенсен шучĕ ÿссе пырать.

Оккупациленĕ районсене тискеррĕн пусмăрласа нимĕçлетеççĕ. Белоруссире, çав «Минскер цейтунг» хаçат каланă тăрăхах, белорусс шкулĕсене хупнă. Пĕтĕм Минскра, тет хаçат, «вĕренÿ çулĕ 9 шкулта пуçланмалла, вĕсенчен пиллĕкĕшне нимĕç войскисем йышăнса тăраççĕ-ха». Çав шкулсенче нимĕç чĕлхипе вĕрентмелле. Учительсем экзамен памалла, вĕсен «çамрăксене нимĕçсене кирлĕ пек вĕрентсе ÿстерме пултарнине кăтартмалла. Вĕсен хăйсен пурнăçĕ çинчен çырса памалла, унтан хăйсен политикăллă шухăшĕсене кăтартса памалла». Пĕтĕм Белоруссире белорусс шрифтне латинла шрифтпа улăштарма приказ панă. Çавăн çинчен калаca, «Минскер цейтунг» хаçат çапла çырать: «Германире латинла шрифтпа усă курнă пирки вăл Белоруссире те пĕртенпĕр шрифт пулса тăмалла», тет.

Гитлеровецсем оккупациленĕ районсенчи халăхсене хăйсен тарçисем туса хураççĕ. Вĕсем ачасемпе хĕрарăмсене тата стариксене йывăр ирĕксĕрле ĕçе хăваласа пухаççĕ. Эстонире, «Ревалер цейтунг» хаçат каланă тăрăх, 10 çултан иртнĕ çамрăксем валли ирĕксĕрле ĕç йĕрки туса хунă. «Кашни эстонец хĕрĕн, — тесе çырать хаçат, — çур çул хушши нимĕç хуçисем патĕнче килти работница пулса ĕçлесе тăмалла тата çур çул хушши ялхуçалăхĕнче ĕçлемелле». Гитлеровецсем оккупациленĕ районсенче чăн-чăн крепостникла, чураллă йĕрке туса хунă.

Халăх гитлерла правительсен мĕнпур мероприятийĕсене ытларах та ытларах хаяррăн хирĕç тăрать. Гитлерла хаçатсен статьисенче — оккупациллĕ влаçсем тăвакан ĕçсене «хирĕç тăраççĕ тата ăнланса илеймеççĕ» тесе ÿпкелешсе çыраççĕ.

Совет патриочĕсем хирĕç тăнине пусарса лартас тесе, гитлеровецсем вĕсене тискеррĕн тыткалаççĕ. «Ревалер цейтунг» хаçатра çакăн пек приказ пичетленĕ: «Нимĕç влаçĕсемпе килĕштерсе ĕçлесшĕн мар пулса тăракан» çынсене продовольстви карточкисем памалла мар, тенĕ. Оккупациленĕ районсенчи халăх массисем хирĕç тăнине гитлеровецсем çапла ĕнтĕ выçлăхпа пăвса пусарса лартасшăн.

Вĕсем тата питех те хаяр террор тăваççĕ, пере-пере пăрахаççĕ, асаплантараççĕ, асаплантарса вĕлереççĕ. Минскра темиçе пин совет гражданне персе вĕлернĕ. Гестаповецсем куллен вуншар, çĕршер çынна вĕлереççĕ. Ача амăшĕсем хăйсен ачисене тупаймаççĕ, ачисем — хăйсен амăшĕсемпе ашшĕсене тупаймаççĕ. «Минскер цейтунг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, хулара сыхланса юлнă çуртсен стенисем çинче çынсем нумай çырнă. «Ку вăл, — пĕр вăтанмасăр çырать гитлерла хаçат, — пысăк трагедисен йĕрĕсем пулса тăраççĕ. Нумай çынна питĕ пысăк инкек пырса çапнă. Пĕчĕк ачасем урамсенче йĕрсе çÿреççĕ, амăшĕсене чĕнеççĕ. Нумай семье сапаланса кайнă. Хăйсен пĕр хыпарсăр çухалнă тăванĕсене хăйсем çинчен пĕлтерес тесе, çынсем стенасем çине хăйсен ячĕсене çырса хураççĕ. Пĕр хĕрарăм тăватă пĕчĕк ачине çухатнă та хăйĕн кÿршисене çав ачасене тупма пулăшма йăлăнать. Çавăн пек çырнисем питĕ нумай».

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Чили хушшинчи çыхăнусем

ВАШИНГТОН, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн аслă вырăнта ĕçлекен представителĕ корреспондентсене çапла каланă: тĕнĕл держависен Чилипе Аргентинăри агенчĕсем противникăн подводнăй лодкисене пулăшса тăнă.

Америкăн çав представителĕ каланă тăрăх, США Чилире çĕнĕ президента Риоса суйланă хыççăн Чили политики улшăнĕ тесе шанса тăратчĕ, анчах Чили правительстви çапла шаннине тÿрре кăлармарĕ.

Тĕрĕс сведенисем тăрăх, Аргентинăри радиокомпани хăй ирĕкĕпех тĕнĕл держависемпе çыхăнма пăрахма шутланă, анчах та Аргентина правительстви çыхăну хатĕрĕсене контрольлесе тăрас ĕçе хăйĕн аллине илнĕ, вăл ăна тĕнĕл держависемпе çыхăнмалли çав мая сыхласа хăварас тесе хăйĕн аллине илнĕ.

Гитлеровецсем Францие çаратаççĕ тата ăна экономика тĕлĕшпе чуралăха кĕртсе яраççĕ

НЬЮ-ИОРК, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри «Монитор» хаçат çапла çырать: нимĕçсем Франци промышленноçĕн пысăкрах пайне пĕтĕмпех Германи экономикипе хутăштарса янă. Нимĕçсен заказĕсене тата Германие рабочисем ярас ĕçе лайăхрах туса пыма пултăр тесе, вĕсем Францин пĕтĕм промышленноçне «реорганизацилеççĕ».

Нимĕçсем Францире чи лайăх оборудованиллĕ предприятисене çеç, нимĕçсем ыйтнине тума пултараканнисене çеç ĕçлеме ирĕк параççĕ. Франци промышленноçĕн халь обязательнăй йĕркепе нимĕçсен производство меточĕсемпе ĕçлемелле, продукцие нимĕçсен чертежĕсем тăрăх тумалла тата нимĕçсен фабрикăпа заводсен изделийĕсен номенклатурине пăхăнса пымалла. Гитлеровецсем Франци промышленникĕсене Франци промышленноçĕн тĕрлĕ отраçлĕсене Германин промышленность треçчĕсемпе тата концернĕсемпе хутăштарттарнă.

Гитлеровецсем Франци промышленноçне тытса илни Франци халăхĕн асапĕсене ÿстерсе ярать, мĕншĕн тесен ĕлĕкрех Франци рынокĕ валли ĕçлесе тăнă предприятисем халĕ куллен питĕ кирлĕ таварсене тумашкăн та чĕртавар та, топливо та илеймеççĕ. Промышленность тăвакан таварсем çукки хуласемпе промышленноçлă районсенче пурнăçа продовольстви тĕлĕшпе нумай йывăрлатать. Французсен хресченĕсем хăйсен тыррисене тытса илнĕ хыççăн юлнă юлашки продукчĕсене хулана илсе кайса хут укçалла сутма килĕшмеççĕ, мĕншĕн тесен çав хут укçапа вĕсем промышленность таварĕсене илеймеççĕ.

Совет Союзĕн Канадăри посланникĕ Оттавана çитнĕ

ОТТАВА, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Оттавăна Совет Союзĕн Канадăри посланникĕ Гусев юлташ пырса çитнĕ, унпа пĕрле дипломатиллĕ миссин персоналĕ те пынă.

Вокзалра Гусева тата миссин членĕсене премьер-министр Кинг кĕтсе илнĕ. Кинг посланника кĕске сăмах каласа саламланă. Совет посланникне кĕтсе илнисем хушшинче çар округĕн командующийĕ Ванье генерал тата пичет представителĕсем пулнă. Поезд пынă çĕре вокзала çынсем нумай пухăнса тăнă, вĕсем Совет Союзĕн посланникне саламланă.

ОТТАВА, октябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 13-мĕшĕнче Канадăн премьер-министрĕ Макензи Кинг Совет посланникне Гусев юлташа йышăннă. Калаçу пĕр сехете пынă.

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: октябрĕн 14-мĕшĕнче Англи самолечĕсем Ланнион çывăхĕнчи (Çурçĕр Франция) товарнăй поездсене тата чугунçул мастерскойне атакăланă.

Партиллĕ пропагандăна вăйлатассишĕн

Пирĕн тăван çĕршыв халĕ хăйĕн историйĕнчи йывăр та хăрушă вăхăта пурăнса ирттерет. Совет çыннисен çак кунсенче пур çĕрте те — çапăçура та, ĕçре те — нихăçанхинчен çирĕп, дисциплинăллă тата пĕрлĕхлĕ пулмалла. Çавăн пек пулма пирĕн ĕççыннисене большевикла пропагандăпа агитаци пулăшать.

Большевикла пропагандăпа агитаци совет çыннисене тăван çĕршывшăн вăя хурса ĕçлеме, эпир мĕншĕн çапăçнине ăнланма, пирĕн çĕнтерĕве шанса тăма вĕрентет. Çавăнпа та халĕ партиллĕ пропаганда питех те кирлĕ ĕç пулса тăрать.

Партиллĕ пропагандăна марксистла-ленинла теорин çирĕп никĕсĕ çине тайăнса çеç ăнăçлăн туса пыма пулать. Марксистла-ленинла теори — çĕнтерÿ патне ертсе пыракан шанчăклă çул, пирĕн тĕрĕс ĕçшĕн, ирĕклĕхшĕн, никама пăхăнманлăхшăн кĕрешмелли вăйлă хĕçпăшал.

Марксистла-ленинла теорин энциклопедийĕ — «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» пулса тăрать. Çавăнпа та пирĕн çак паха кĕнекене яланах вĕренсе, хамăрăн политикăллă пĕлĕве ÿстерсе пымалла.

Анчах «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренес ĕçре вăрçă вăхăтĕнче хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур. Революциллĕ теорие вĕрени пире хальхи вăхăтра пулса пыракан пысăк улшăнусене ăнланса илме, практикăллă задачăсене татса пама пулăшма тивĕçлĕ.

Кĕске курсăн 1-мĕш сыпăкне вĕрени пире гитлеризмăн реакциллĕ планĕсене, пирĕн çĕршыва пĕтерсе тăкнă чуралăха Гитлер каялла таврăрма хăтланнине ăнланса илме пулăшать. Большевиксен вăрçă тĕлĕшĕнчи теорийĕпе тактикине вĕрени хальхи вăхăтри пĕтĕм тĕнчери лару-тăрувăн тĕп ыйтăвĕсене ăнланса илме май парать. «Большевиксен партийĕ ютçĕршывсен вăрçăллă интервенцийĕпе граждăн вăрçи тапхăрĕнче» ятлă сыпăк хальхи вăрçă мĕнле пынине тата унăн задачисене ăнланса илес çĕрте пысăк вырăн йышăнса тăрать. Индустриализаципе коллективизаци çинчен калакан сыпăксем пирĕн Хĕрлĕ Çар ăçтан вăй илсе тăнине кăтартса параççĕ.

Сталин юлташ вăрçă вăхăтĕнче тухса каланисем тата унăн Майăн пĕррემĕшĕнчи приказĕ революциллĕ теорие малалла аталантарни пулать. Вĕсем хальхи вăхăтра пулса иртекен пысăк событисене тĕрĕс ăнланма тата çав событисем малалла мĕнле аталанса пырассине курма пулăшаççĕ.

Кашни коммунистăн, комсомолецăн, совет интеллигенцин тивĕçĕ — çак историллĕ произведенисене тĕплĕн вĕренесси.

Анчах та вăрçă вăхăтĕнче Шупашкар хулинчи парти организацийĕсен руководителĕсем партиллĕ пропаганда ĕçне вăйсăрлатни сисĕнет. Юлашки кунсенче çеç парти пропагандин ыйтăвĕсене коммунистсен пухăвĕсенче сÿтсе-явма пуçларĕç.

Шупашкар хулинчи парти активĕн сентябрĕн юлашки кунĕсенче пулса иртнĕ пухăвĕнче çак ыйтăва атарласа лартса сÿтсе-явнă. Пуху хулари парторганизацисенче партиллĕ пропаганда ĕçĕ мĕнле пулса пыни çинчен тата унăн задачисем çинчен тивĕçлĕ решени йышăнчĕ. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренес ĕçе япăхтарса янă Наркомзем, Горисполком, Наркомфин тата ытти учрежденисем çумĕнчи парти организацийĕсене пуху хытă критикăларĕ. Асăннă парторганизацисенчи коммунистсенчен чылайĕшĕсем вăрçă вăхăтĕнче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» алла тытса та пăхман, хăйсен идейăпа политикăллă пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлемен. Çакна хăшпĕр коммунистсем вăрçă кунĕсенче «пушă вăхăт» çуккипе ăнлантарса пама пăхаççĕ. Вăрçă харпăрхăйĕн пĕлĕвне ÿстерес ĕçĕн пĕлтерĕшне пĕртте чакармасть, çав ĕçе татах та кирлĕрех туса хурать. Вăрçă пирĕн умма нумай тата йывăр задачăсем кăларса тăратрĕ. Большевизм шкулĕ витĕр тухсан çеç çав задачăсене ăнăçлăн татса пама пулать.

Унсăр пуçне вăрçă кунĕсенче пирĕн ертсе пыракан работниксен çĕнĕ йышĕ хутшăнчĕ, парти ретне кĕрекенсем нумайланчĕç. Çĕнĕ кадрсемпе çамрăк коммунистсем революциллĕ теорие хальхи вăхăтри пысăк ĕçсемпе çыхăнтарса вĕренме тивĕçлĕ. Кунта ÿркенсе тăманни, вĕренÿшĕн çунни çеç кирлĕ.

Революциллĕ теорие вĕренес ĕç юлашки вăхăтра хускалнине хăшпĕр организацисенче лайăхланнине курма пулать. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренес тĕлĕшпе кружоксем тăваççĕ, чылай коммунистсем хăйсем тĕллĕн вĕренеççĕ.

* * *

Чăвашсоюз çумĕнчи парторганизаци секретарĕ Петрова юлташ харпăрхăй пĕлĕвне ÿстересси çинчен — уйрăм коммунистсемпе калаçусем, коммунистка Мусатова юлташ — консультацисем ирттерет. Пĕрле пухăнса теориллĕ калаçусем те ирттереççĕ.

Анчах та парторганизаци секретарĕсем пурте çак ĕç çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхаççĕ теме çук-ха. Чăвашгиз çумĕнчи парторганизацире партиллĕ пропаганда ыйтăвĕсене манăçа хăварнă. Организаци секретарьне Павлов-Пинер юлташа çакăн пирки ВКП(б) хула комитечĕ асăрхаттарнă пулин те тата актив пухăвĕ решени йышăннă хыççăн та кунта партиллĕ пропаганда ыйтăвĕсемпе ĕçлеме «вăхăт тупаймаççĕ».

Уйрăм парторганизацисен секретарĕсем партиллĕ пропаганда ыйтăвĕ çине çапла тимсĕррĕн пăхнине пĕтерес пулать, мĕнпур коммунистсене, комсомолецсене тата актива вĕренÿ çине ытларах çавăрăнса пăхма хăнăхтарас пулать.

Хамăрăн идейăллă тата политикăллă пĕлĕве ÿстермелли тĕп форма вăл — «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» тата Маркс, Энгельс, Ленин, Сталин произведенийĕсене харпăрхăй тĕллĕн вĕренни пулать. Анчах çак ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса ларма юрамасть, парти организацийĕсен руководителĕсен ăна пĕрмаях тĕрĕслесе тăмалла, революциллĕ теорие вĕренекенсене консультацисем, докладсем, лекцисем ирттерсе тăтăшах пулăшу памалла.

Пирĕн коммунистсем хулари парткабинет ирттерекен лекцисемпе консультацисене те начар çÿреççĕ-ха. Швейпромсоюзри агитколлектив руководителĕ Писарева юлташ хăй те парткабинета лекцисем итлеме йĕркеллĕ çÿремест. Çакă вăл Писарева юлташ пурне те пĕлнинчен мар, харпăрхăй пĕлĕвне ÿстерме кирлине хакламаннинчен килет.

Пропагандăна лекцисем урлă туса пырасси вăрçă вăхăтĕнче уйрăмах анлăн сарăлчĕ. Вăрçă пуçланнăранпа хулара икĕ пин ытла лекци ирттернĕ. Вĕсенчен чылайĕшсем отечественнăй вăрçă çинчен. Малашне ВКП(б) историйĕ тăрăх тата марксизм-ленинизм классикĕсен уйрăм произведенийĕсем тăрăх ытларах лекцисем ирттерме кирлĕ пулать.

Хамăрăн идейăллă тата политикăллă пĕлĕве ÿстермелли тепĕр май вăл — кружоксем. ВКП(б) историне тата Сталин юлташăн «Совет Союзĕн отечественнăй вăрçи çинчен» калакан произведенийĕсене вĕренмелли кружоксем чылай предприятисемпе учрежденисенче ĕçлеме пуçларĕç.

Н-ски заводра (ЦК ВКП(б) парторгĕ Полукаров юлташ) ВКП(б) уставĕпе программине вĕренмелли кружок организациленĕ. Кружок членĕсем — çамрăк коммунистсем, комсомолецсем тата союзра тăман çамрăксем. Çакăн пек кружоксене ытти предприятисемпе учрежденисенче те организацилемелле. Çавăн пекех «Совет Союзĕн отечественнăй аслă вăрçи» тема тăрăх, «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» уйрăм сыпăкĕсем тăрăх, пирĕн тăван çĕршывăн историйĕ тăрăх тата ытти темăсемпе те кружоксем организацилесен вырăнлă пулмалла.

Анчах кружоксене тунă чух пирĕн кадрсен пĕлÿ анлăшне, вĕсен интересĕсене шута илес пулать. Кружокăн занятийĕсене чĕрĕ те интереслĕ калаçу формипе ирттермелле, занятисене яланах тĕплĕн хатĕрленсе пымалла.

Хальхи вăхăтра тата агитаторсене хăйсене идейăпа политика енчен вĕрентсе ÿстерес тĕлĕшпе нумай ĕçлес пулать. Чылай çĕрте çавна манаççĕ, агитаторсем хăйсен ĕçне харпăрхăй тĕллĕнех туса пыраççĕ.

Агитколлектив вăл — яланах ĕçлекен семинар. Агитколлектив руководителĕ — семинар руководителĕ. Унăн агитаторсене заданисем памалла çеç мар, вĕсене политикăллă ыйтусене ăнланса илме, пĕлÿ енĕпе ÿсме пулăшмалла.

Чылай предприятисемпе учрежденисенче вĕренме кирлĕ пулăмсемпе литературăсем çук пирки çак ĕçре чăрмавсем пулаççĕ. Парторганизаци секретарĕсен пур пек библиотекăсене сыхлама тата пуянлатма тăрăшас пулать. Пур пек учебниксемпе тирпейлĕн усă курас пулать. Харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсен М. Горький ячĕпе тăракан библиотекăпа тата парти кабинечĕпе таччăнрах çыхăнмалла.

Хулари парти активĕн пухăвĕ çавăн пекех Шупашкарти комсомол организацийĕсем çамрăксене идейăпа политика тĕлĕшпе пăхса ÿстерес ĕçе начар туса пынине палăртса хăварчĕ. Чылай парторганизацисен секретарĕсем çак ĕçре комсомол организацийĕсене тивĕçлĕ пулăшу памаççĕ, çамрăксене вĕрентсе ÿстерес ĕç хăй тĕллĕнех пулса пырассине шанса лараççĕ.

Промышленноçри парторганизацисен боевой задачисенчен пĕри вăл — çамрăк рабочисене политика тĕлĕшпе пăхса ÿстересси тата вĕсене производствăна вĕрентесси. Çак ыйтупа вара пирĕн парторганизацисем ку таранччен пачах та çителĕксĕр ĕçленĕ. Предприятисенчи партиллĕ пропагандăна халĕ производствăна вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек организацилесси тавра, топливăна, чĕртавара, материалсене, электроэнергие тата ыттине те перекетлесси тавра, социализмлă ăмăртăва вăйлатас тĕллевпе туса пырас пулать.

Çар пропагандине сарас тĕлĕшпе те эпир çителĕксĕр ĕçлетпĕр. Хальхи вăхăт пире тăшмана хирĕç алла хĕçпăшал тытса тухма хатĕр тăма хушать. Хĕçпăшалсене вĕренесси, сывлăшран тапăннинчен сыхланма пĕлесси, алла хĕçпăшал тытма хатĕрленесси — кашни совет патриочĕн обязанноçĕпе тивĕçĕ.

Парторганизацисем Осоавиахимпа пĕрле калаçусем, докладсем ирттерме, кружоксем тума, çар ыйтăвĕсемпе практикăллă занятисем ирттерме тивĕç.

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕрени пире, совет работникĕсене, революциллĕ теорипе хĕçпăшаллантарать. Çак теорин вăй-хăвачĕпе чăнлăхне большевиксен партин историйĕ кăтартса парать, ăна эпир халĕ, отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче те куратпăр. Марксистла-ленинла теори пире пулса иртекен событисене тĕрĕс ăнланса илме, умра тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама, нимĕç фашизмне пĕтерессишĕн пыракан кĕрешÿре ĕççыннисен массисене пултаруллăн ертсе пыма пулăшать. Çавăнпа та кашни коммунистăн, комсомолецăн, кашни совет работникĕн хисеплĕ задачи вăл — харпăрхăй пĕлĕвне ÿстересси, тавракурăмне анлăлатасси, хăйĕнчен идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çирĕп çын пăхса çитĕнтересси пулать.

С. ИСЛЮКОВ.
ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн пропаганда отделĕн заведующийĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 387 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.